Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

108-109 (7639-7640) №№ ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи декабрĕн (раштав) 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Раççейре

Кризис. Депутатсем те, чиновниксем те перекетлеççĕ

РФ Патшалăх Думин депутачĕсем çулленхи ырă йăларан кăçалăха хăтăлма палăртнă. Вĕсем кĕрхи сесси вĕçленнĕ тата Çĕнĕ çул ячĕсемпе унччен черкке çĕкленĕ пулсан кăçал банкет пулмасть. Депутатсем кризис вăхăтĕнче бюджет шучĕпе уяв туни вырăнсăр тесе шутлаççĕ.

Калининград облаçĕн влаçĕ кризиспа кĕрешессине хăйĕнчен пуçланă. 2009 çулта патшалăх служащийĕсен оклачĕсене индексацилессине чарса лартнă. Регионти финанс министрĕ Е. Матвеева палăртнă тăрăх, çапла майпа 50 миллион тенкĕ перекетлеме май килет. Ку укçа-тенкĕне тĕллевлĕ программăсене пурнăçлама яраççĕ.

Амур облаçĕн чиновникĕсем вара иномаркăсем çинчен хамăр çĕршывра кăларнă авомобильсем çине куçса ларма шантарнă. Губернатор йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн гаражри иномаркăсене конкурспа сутаççĕ. Çав укçапа «Волга» автомобильсем туянаççĕ. Çапла майпа 9,5 миллион тенкĕ перекетлеме палăртаççĕ. Ку утăм çавăн пекех хамăр автопром çине тимлĕх уйăрма та пулăшмалла.

«Российская газета» хаçатран.

Çын ĕçпе илемлĕ

Хастарлăхпа палăрса тăрать

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Елена Эркольевна Митрофанова Муркашри кĕнеке магазинĕнче вăй хурать. Вăл райпо тытăмĕнче 1996 çултанпах ĕнтĕ. Çак вăхăтра ĕçтешсем хушшинче Елена Эркольевна тăрăшулăхĕпе, тараватлăхĕпе палăрма ĕлкĕрнĕ. Тавар туянакансен кăмăлне яланах туллин тивĕçтерет: илес таварăн хăш тĕсĕ, хаклăраххи е йӳнĕреххи кирлĕ-и – веçех ыйтса пĕлет çамрăк сутуçă, пĕрре те ӳркенсе ĕçлемест.

Республикăра, районта иртекен спорт ăмăртăвĕсенче вара вăл Муркаш райповĕн чысне пĕрре мар хӳтĕленĕ. Йĕлтĕрпе чупмалла-и, шывра ишмелле-и – пур енĕпе те маттур Елена Эркольевна. Пултарулла та хастар сутуçăн малалла та ăнăçусем пулччăр.

Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.

ЧР Президенчĕн Çырăвне сӳтсе яватпăр

Чăваш Ен çитĕнĕвĕ – кашнин пуçарăвĕнче

Декабрĕн 16-мĕшĕнче Шупашкарта, Правительство çурчĕн Пысăк залĕнче, Чăваш Республикин тăваттăмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн вун çиччĕмĕш сессийĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров кăçал Патшалăх Канашне янă «Чăваш Ен çитĕнĕвĕ – кашнин пуçарăвĕнче» Çырупа тухса калаçрĕ. Паянхи калаçава хутшăнакансем çак Çыру пирки хăйсен шухăшкăмăлне пĕлтерме пулчĕç.

Н. НИКИТИН, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:

– Президент хăйĕн Çырăвĕнче республика влаçĕн тата вырăнсенчи влаççен кризис пулăмĕсен тапхăрĕнче ĕçлемелли çул-йĕре палăртрĕ. Ку питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Мĕн палăртнине пурнăçлама майсем тупатпăрах.

Президент пур шайри влаççене, чи малтанах вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене хăйсен территорийĕсенче, çынсемпе уйрăммăн ĕçлемелли пирки аса илтерчĕ. Çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен йывăр вăхăтра çынсене ăнлантарса парас пулать, вĕсемпе курса калаçмалла, ĕç-пуç пирки тĕрĕс пĕлтермелле, тĕрлĕ сас-хурана сирмелле. Çырура тĕп вырăнта – халăхăн пурнăç шайне çĕклеме тăрăшни.

В. ИВАНОВ, пенсионер:

– Хальхи вăхăтра влаççен тимлĕхĕнче тĕп вырăнта çын пулса тăрать. Умри çивĕч ыйтусене татса парасси çынсен интересĕсене чакарса мар, ытти ресурспа резерв шучĕпе пулса пымалла. Çакна хăйĕн Çырăвĕнче Президент уçăмлă палăртрĕ. Ватă çынсене, пенсионерсене, инвалидсене, нумай ачаллă çемьесене тивĕçлĕ социаллă пулăшу парасси чакмĕ тесе шутлатăп.

В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.

Ыйту – хурав

Налук саплаштарăвне илме пулать

«Пурăнмалли çурт-йĕр тунă е туяннă чухне çынсем тупăшран тӳленĕ налук суммине патшалăх каялла тавăрса парать тенине илтнĕччĕ. Ку тĕрĕсех-и? Ăна илес йĕрке мĕнлерех?» Çакăн пек ыйтусем пирĕн хаçат редакцине те, «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пунктне те килчĕç.

Пĕр çынна кăна мар хумхантаракан ыйту çине РФ Налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6-мĕш № инспекцийĕн ертсе пыракан специалист-эксперчĕ Надежда Евстафьевна Иванова хуравлама килĕшрĕ:

– Ку тĕрĕсех. Раççей Федерацийĕн территорийĕнче çĕнĕ çурт-йĕр тунă тата хваттер, пӳлĕм е вĕсенче пай туяннă чух тăкакланă укçа-тенкĕрен налук шучĕпе тӳленĕ 13 процентне каялла тавăрса параççĕ. Ку таранччен çурт тунă (хваттершĕн тӳленĕ) суммăн 1 миллион тенкинчен çеç çак налука саплаштарнă. Халĕ вара кăçалхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче йышннă 224 № Федераллă Саккунпа килĕшӳллĕн 2008-мĕш çулшăн тата малашне те налук саплаштарăвне илес тенĕ чух 2 миллион тенкĕрен шутлаççĕ.

Каламалла, пурлăхран çапла майпа шутласа панă суммăна пĕр хут кăна илме пулать. Çакна валли налук инспекцине пурлăх харпăрлăхра пулни çинчен çирĕплетекен документсем, декларацци тăратмалла, заявлени çырса памалла. Кунсăр пуçне налук саплаштарăвне илме май паракан укçа-тенкĕ тăкакланине кăтартса паракан ытти документсене те хатĕрлесе памалла.

Специалист хуравĕ çумне «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн политканаш секретарĕ Альберт Николаевич Иванов акă мĕн хушса каларĕ:

– «Единая Россия» парти ертӳçи, правительство пуçлăхĕ В.В. Путин декабрьте граждансен ыйтăвĕсене хуравланă чухне çакăн пирки асăнчĕ. Вăл кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен çурт-йĕр тăвакансене е хваттер туянакансене тупăшран тытнă налука 2 миллион тенкĕрен тавăрма шантарчĕ. Çак сĕнĕве пурнăçа кĕртни питĕ пĕлтерĕшлĕ.

Наркотиксене хирĕç кĕрешекен комисси ларăвĕ иртрĕ

Шăпамăр хамăр алăрах пуль...

Телее, наркотиксемпе иртĕхекенсем çук, анчах та эрех ĕçекенсен йышĕ сахалах мар-ха. Çакă палăрчĕ наркотиксене хирĕç кĕрешекен районти комисси ларăвĕнче Турай, Хорнуй, Ярославка ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен (комисси асăннă ял тăрăхĕсенче психоактивлă веществосемпе усă куракансемпе профилактика ĕçĕсене епле ирттернине пăхса тухрĕ) сăмахĕсенчен. Апла пулсан, эрех ĕçекенсемпе кĕрешесси паянхи чи çивĕч ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Турай ял тăрăхĕнче, ав, кăçал çак сăлтава пула пĕр çемьене ашшĕ-амăш прависенчен хăтарнă. Час-час эрех ĕçекенсем кунта 8-ăн учетра тăраççĕ. 2 çемье сăмакун сутса услам тăвать. Шутласассăн, пысăк цифра та мар пек. Анчах çакна манмалла мар, çав эрехпе иртĕхекен 8 çемьере ачасем те пур вĕт. Вĕсен шăпи хуçăлать пĕчĕккĕллех. Эрех сутакан çав икĕ çемье ялти миçе çемьене инкек валеçет? Районĕпе тата миçе ача нуша курать ĕçекен ашшĕ-амăшĕпе?

Ял тăрăхĕсене ертсе пыракансем, вĕсенчи комисси членĕсем ăнăçсăр çемьесене тухса çӳренин, ялти пухусенче çак ыйтăва хускатнин витĕмĕ çук мар. Ялта пирĕн çынран вăтанасси, телее, пĕтмен-ха. Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.А. Любимова каланă тăрăх, ĕçме пăрахакан çемьесем те пур. Савăнтарать çакă. Анчах та эрех, спирт сутакан çемьесене алăран ярса тытма ялта пурăнакансенчен никамах та пулăшасшăн мар. Хорнуй ял тăрăхĕнче кун пеккисем 4 çемье. Ярославка ял тăрăхĕнче те 11 çемьерен 5 юлчĕ çак «бизнеспа» «ĕçлекенсем».

Ялта йĕрке çирĕплентĕр тесен, милицин участокри уполномоченнăйĕсен те час-час вырăнти, халăхпа ĕçлени кирлĕ. Ялта пурăнакансен те хамăрăн инкекпе хамăрăн та кĕрешмелле. Ачасем аслисем çине пăхаççĕ вĕт. Унсăрăн шкулта ачасем сывă пурнăç йĕркипе пурăнма хăнăхчăр тесе хăть мĕн чухлĕ калаçу, тренинг ирттернин те усси пулмасан пултарать. Теорипе пурнăç пĕр килсен çеç усăллă пулĕç çак калаçусем. Районти диагностикăпа консультаци центрĕн ертӳçи Л.А. Верховцева каланă тăрăх, центр ку енĕпе вĕрентекенсемпе те, ачасемпе те нумай ĕç туса ирттерет. Пирĕнтен вара, аслисенчен, хамăра алăра тытни кирлĕ, çитĕнекен ăрушăн ырă тĕслĕх пулса тăни. Çакна пирĕн хамăрăнах ăша хывмалла.

Вулакансене çакăн çинчен те асилтерсе хăварас килет. Ялсенче çуркунне хуларан килсе ятарласа мăкăнь сапса хăваракансем пур, çавăнпа та хăвăр пĕрмай пурăнман кил анкартине те куçран ан вĕçертĕр. Шăтса тухнă мăкăньшăн кил хуçин уголовнăй майпа явап тытмалла пулса тухать.

Комисси ларăвĕнче çавăн пекех районти çамрăксен парламенчĕ ĕçсĕр çамрăксемпе епле ĕçленине пăхса тухрĕç, ку ĕçе лайăхлатмаллине палăртса хăварчĕç.

Л. ТУКТИНА.

Пенси ыйтăвĕсемпе

Январьти пенсие – маларах

РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх, Çĕнĕ çул уявĕсене шута илсе çитес çулхи январь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пенсипе тата социаллă тӳлевпе тивĕçтермелли графика улшăнусем кĕртнĕ.

Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенчи çыхăну уйрăмĕсене шутламасăр (вĕсен уйрăм график) ытти район-хулари почтамтсемпе хулари çыхăну уйрăмĕсем тӳлевсене январĕн 3–5-мĕшĕсенче памаллисене декабрĕн 29–31-мĕшĕсенче, ялти çыхăну уйрăмĕсем декабрĕн 30–31-мĕшĕсенче çитерсе параççĕ. 2009 çулхи январĕн 6–7-мĕшĕсенче валеçмеллине хулари тата ялти çыхăну уйрăмĕсем январĕн 6-мĕшĕнче валеçеççĕ.

2009 çулхи январĕн 8-мĕшĕнчен пенсие почта яланхи график тăрăх тӳлеме тытăнать.

Январĕн 2–12-мĕшĕсенче илмелли пенсие тата социаллă тӳлевсене банксем счет çине кăçалхи декабрĕн 27–31-мĕшĕсенче куçараççĕ.

Юбилей

Саламлатпăр

Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулти биологипе химии вĕрентекен **Анфиса Антиповна КУПЦОВАНА** юбилей ячĕпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кунçул, ĕçре çитĕнӳсем сунатпăр.

Саламлаканĕсем: вĕренекенсем, вĕрентекенсем, ашшĕ-амăшĕсем.

Çĕньял Муркаш ялĕнче пурăнакан **Любовь Владимировна ДАНИЛОВАНА** 35 çул тултарнă ятпа пур кăмăлтан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çуралнă кун ячĕпе саламласа эпир ăна вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу, лăпкă пурнăç сунатпăр. Нумай çул çемйӳпе, тăванусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

Саламлаканĕсем: ашшĕпе амăшĕ, мăшăрĕ, Вальăпа Коля, аппăшĕсем, Пушкăртри, Кăпасри, Çармăçкассинчи тăванĕсем.

Дорогого сына, брата, мужа, отца, дядю – **ПИНАРИНА Владимира Леонидовича** поздравляем с 45-летием. Желаем крепкого здоровья, благополучия, успехов в работе, долголетия.

С поздравлением: Пинарины, Ивановы, Шаланговы, Васильевы.

Çырăнтару – 2009

Çырăнтару вĕçленет, шутлă кунсем юлчĕç

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.

Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!